26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАЙ
19
ЮНКУН
104(6341) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркне пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Наркомземăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

35. **Красноармейски МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 9-мĕш тракторнăй бригади** (бригадирĕ **Е. И. Иванова**). Бригада çураки вăхăтĕнче планпа палăртнă 191 гектар вырăнне 265 гектар сухаланă, 138 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

36. **Красноармейски МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 8-мĕш тракторнăй бригади** (бригадирĕ **У. Н. Николаева**). Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа палăртнă 277 гектар вырăнне 351 гектар сухаланă, 127 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

37. **Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 1-мĕш тракторнăй бригади** (бригадирĕ С. П. Эзвенкин). Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа палăртнă 477 гектар вырăнне 498 гектар сухаланă, 140 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

38. **Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи 2-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **Ф. И. Афондеркин**). Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа палăртнă 474 гектар вырăнне 494 гектар сухаланă, 170 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

39. **Элĕк МТС-ĕнчи 7-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **П. В. Васильев**). Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа палăртнă 207 гектар вырăнне 275 гектар сухаланă, 710 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

40. **Элĕк МТС-ĕнчи 13-мĕш тракторнăй бригада** (бригадирĕ **А. Л. Лукин**). Бригада, çемçе суха çине куçарса шутласан, планпа палăртнă 207 гектар вырăнне 256 гектар сухаланă, 544 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

41. **Дария Васильевна Илюшкина** — Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи хĕрарăмсен 4-мĕш тракторнăй бригадин трактористки. Вăл çураки вăхăтĕнче У-2 тракторпа ĕçлесе, планпа палăртнă 35 гектар вырăнне 70 гектар сухаланă, 34 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренӳ çулне организованно вĕçлер

Ыран, майăн 20-мĕшĕнче, шкул ачисен çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пуçланаççĕ. Советăн миллионшар çамрăкĕсем тата пиншер учителĕсем пĕтĕм халăх тата фронтовиксем умĕнче хăйсен вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренӳ çулĕнчи ĕçĕсемшĕн экзамен тытаççĕ, халăха тата тăван Хĕрлĕ Çар воинĕсене хăйсен пĕлӳлĕхĕпе пултаруллăхне кăтартса параççĕ.

Тăван çĕршыв юнĕçен Гитлерăн йыт-кĕтĕвĕсене хирĕç çирĕм виçĕ уйăха яхăн кĕрешет. Çак йывăр та хаяр вăрçă кунĕсем шкулсен ĕçне чылай улшăнусемпе йывăрлăхсем кӳчĕç. Совет шкулĕсене çамрăк та вĕрентӳ ĕçĕнче çителĕксĕр хăнăху илнĕ учительсем тăчĕç.

Анчах тăван çĕршыв тата ăна хӳтĕлекенсем умĕнчи тивĕçе ялан туйса тăни çамрăк учительсене кĕске вăхăтрах вĕрентӳ ĕçĕн пуян та паха опытне пухма, ĕçе хăвăрт хăнăхма хавхалантарса пычĕ. Ватă учительсем пулăшнипе вĕсем ачасене коммунистла воспитани парас ĕçе начар мар туса пычĕç, мухтава тивĕç ĕçлерĕç.

Ыран пуçланакан пĕлӳ тĕрĕслевĕсем — шкул ачисен пĕлĕвĕсене тĕрĕслемелли экзаменсем çеç мар, вĕсем çав вăхăтрах совет учителĕпе пĕтĕм совет шкулĕн, çутĕç работникĕсен çулталăк хушшинчи ĕçĕсене тĕрĕслемелли экзаменсем пулса тăраççĕ.

Орденлă Чăваш республикинчи шкулсем, çутĕç органĕсем, учительсемпе вĕренекенсем, шкулсенчи комсомолпа пионер организацийĕсем 1942—1943-мĕш вĕренӳ çулне кăтартуллăн вĕçлессишĕн çине тăрса кĕрешрĕç. Республикăри шкулсем вĕренӳ çулĕн малтанхи çурçулне пĕлтĕрхинчен лайăхрах результатпа вĕçлерĕç. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракансем, пĕтĕмĕшпе илсен, 83,6 процент шутланаççĕ. Ишлей районĕнчи Шетмĕпуçĕнчи Хĕрлĕ ялавлă туллимар вăтам шкул, Комсомольски районри Мăнтăрти туллимар вăтам шкул (директорĕ Слесарев) республикăра уйрăмах палăрса тăраççĕ. Мăнтăрти туллимар вăтам шкулта вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман ачасем вуçех те çук.

Хушнă ĕçшĕн ответлăха туйса тăни, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлени—совет учителĕн хисеплĕ ятне тата çӳлерех çĕклет. Çĕрпӳ районĕнчи Байгеевăри туллимар вăтам шкулта вырăс чĕлхине вĕрентекен учительница Романова, Кувакино районĕнчи Мишуково туллимар вăтам шкулĕнче математикăна вĕрентекен учительница Ильина, Советски райцентрĕнчи вăтам шкулта историпе вĕрентекен учительница Петрова юлташсем вăрçă вăхăчĕ хушнă пек ĕçлеççĕ. Вĕсем вĕреннĕ материала тепĕр хут аса илсе тухас ĕçе уйрăмах аван организацилеĕ.

Республикăри шкулсем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене начар мар хатĕрленнипе кĕтсе илчĕç. Кувакино районĕнче (райсутĕç пайĕн заведующийĕ Шишова юлташ) шкулсем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ирттерме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухнă. Унти шкулсенче майăн 10-мĕшĕ тĕлне пĕлӳ тĕрĕслевĕсем ирттермелли билетсене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе директорсем çирĕплетнĕ. Хатĕрленӳ ĕçĕсене тĕплĕн туса çитернĕ. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсене хатĕрленес тĕлĕшпе Комсомольски, Çĕрпӳ тата Вăрмар райсутĕç пайĕсем те начар мар ĕçлерĕç.

Анчах вĕренӳ çулĕн вĕçне начар результатсемпе тухнă шкулсем те пур-ха. Шăхасан районĕнчи Мăн Яваш вăтам шкулĕ, Элĕк районĕнчи Хăшпĕр шкулсем вĕренӳ программине пурнăçлайман. Райсутĕç пайĕсен заведующийĕсем Христофоров (Шăхасан), Петрикова (Элĕк) юлташсем кун çинчен пĕлсе тăнă пулин те, çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма шутламан.

Халăх шанса панă хисеплĕ ĕç çине ответсăрла пăхни уйрăмах пĕлӳ тĕрĕслевĕсен вăхăтĕнче пулмалла мар. Тĕрĕслевсене пысăк организованноçпа, инструкцине пăхăнса туса ирттерес пулать. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнче ачасем шкула çӳременни е кая юлса çӳрени, тĕрĕслевсем вăхăтĕнче кăштах йĕркесĕрлĕх пулни те ку ĕçе тĕплĕн ирттерме чăрмантарать.

Республикăри шкулсен иртнĕ çулсенчи опычĕ пĕлӳ тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнче кăçал та консультацисем йĕркеллĕн ирттерме кирлине кăтартса парать. Консультацисене ячĕшĕн çеç мар, вĕренекенсене пулăшу парас тĕллевпе туса ирттермелле. Мĕнпур учительсемпе класс руководителĕсен, ашшĕ-амăшĕсен вĕренекенсен вăхăт режимне çирĕппĕн тĕрĕслесе тăрас пулать. Вĕренекенсене пĕлӳ тĕрĕслевĕсене хатĕрленме условисем туса памалла. Шкул ачисене пĕлӳ тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнче ялхуçалăхĕнчи е килти ĕçсене хушма кирлĕ мар.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ирттернипе пĕр вăхăтрах шкулсен умне тата ытти задачăсем те тухса тăраççĕ. Çак çитес кунсенчех шкул ачисен ялхуçалăх ĕçĕсене хутшăнмалли ĕç отрячĕсене туса çитерес пулать тата çĕнĕ вĕренӳ çулне тимлĕн хатĕрленме тытăнмалла.

Шкулсем йывăр та ответлă кунсене пурăнса ирттереççĕ. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен çутĕç фронтĕнче ĕçлекенсене шкул ачисен çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевĕсене ăнăçлăн ирттерме ĕçлĕн пулăшмалла.

Вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренӳ çулне лайăх результатсемпе вĕçлер!

В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ЮГОСЛАВИ ПОСОЛНЕ С. СИМИЧ ГОСПОДИНА ЙЫШĂННИ

Майăн 17-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Югославин СССР-ти чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне С. Симич господина йышăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 17-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 16-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 10 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарнă, боеприпассен складне сирпĕнтернĕ, хурал тăракан карапа путарнă, тăшманăн пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, тăшманăн пехотипе танкĕсем пирĕн позицисене темиçе хут та атакăланă. Çав атакăсене нимĕçсене пысăк çухатусем кӳрсе сирсе янă. Пĕр чаçăн артиллеристчĕсем артиллерин 2 батарейине тата минометсен 2 батарейине аркатса тăкнă, ултă кĕпçеллĕ миномета, хăй тĕллĕн çӳрекен орудие тата темиçе пулемет точкине пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 8 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне, тăшманăн 6 самолетне пирĕн зенитнăй артиллери пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн подразделенисем тăшман çине персе тăнă. 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 2 дзота тата 5 блиндажа аркатнă, минометсен 2 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре гвардеец-минометчиксем тăшман танкне персе çĕмĕрнĕ тата çар грузĕсем тиенĕ темиçе вагона çунтарса янă. Пирĕн разведка тăвакан группа тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та 30 гитлеровеца вĕлернĕ, унтан, станковăй пулемета тытса илсе, пĕр çухатусăрах хăйĕн чаçне таврăннă.

* * *

Калинин фронтĕнчи пĕр участокра тăшманăн пĕр батальон таран пехоти 6 танк пулăшса пынипе халăх пурăнакан пĕр пункта сыхлакан пирĕн подразделение виçĕ хутчен атакăланă. Çав пунктшăн пынă хаяр çапăçура 300 нимĕç салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ е амантнă, тăшманăн 3 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн чаçсем тăшман позицийĕсем çине персе тăнă. Нимĕçсен 6 дзотне, 4 блиндажне тата 2 наблюдательнăй пунктне аркатнă.

* * *

Днепропетровск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен чугунçул хуралне тапаннă. Совет патриочĕсем тăшманăн 60 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 2 складне çунтарса янă. Сталино облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшман гарнизонне тапаннă. Пуçланса кайнă çапăçура партизансем темиçе вуншар гитлеровеца вĕлернĕ. Совет патриочĕсем пĕр автомашина, 40 винтовка, 11 пистолет тата радиостанци тытса илнĕ. Халăх пурăнакан тепĕр пунктра çав отрядри партизансемех 10 тонна бензина тата 2 тонна сĕрмелли материалсене çунтарса янă.

* * *

Кубань таврашĕнче словаксен 1-мĕш мотодивизийĕнчи салтаксен ушкăнĕ Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Пирĕн енне куçнă салтак Ян Бодо çапла каласа панă: «Нимĕçсем словакие çаратса пĕтерчĕç, пирĕн халăха выçă вилмелле туса хучĕç. Гитлеровецсем çак питĕ хăрушă вăрçа пуçласа ячĕç те пире вăйпа вырăссене хирĕç вăрçтарасшăн. Словаксен нимĕç вĕлерекенĕсемпе нимĕнле ĕç те пулма пултараймасть. Пирĕн гитлеровецсемпе авалхи хирĕçӳ пырать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ гитлеровецсемшĕн ухмах кăна юн тăкма пултарать. Вырăссемпе, англичансемпе тата американецсемпе пĕрле эпир нимĕçсене вĕсем Чехословакин чыслăхĕпе ирĕклĕхне таптанăшăн тавăрасшăн».

Майăн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пĕр чаçăн боецĕсем тăшманăн атакине сирсе янă, ăна хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çав çапăçура нимĕçсен темиçе танкне тата 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Кубанĕн анат пайĕнче пирĕн отрядсем 13 пулемет точкине, минометсен 3 батарейине пусарнă, гитлеровецсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем 300 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 9 пулемета аркатнă тата артиллерин 4 батарейине пусарнă. Уйрăм участоксенче нимĕç отрячĕсем разведка тума хăтланнă. Анчах вĕсене пирĕн артиллери сапаласа янă.

* * *

Севск районĕнче пирĕн артиллери, сасартăк вăйлăн персе, тăшманăн 5 дзотне аркатнă, 2 танкне персе çĕмĕрнĕ тата 15 автомашинипе лавне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен «Юнкерс—87» йышши 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче Кондратьев сержант ертсе пыракан автоматчиксен группи, хăйне панă задание пурнăçа кĕртсе пырса, 26 нимĕçе вĕлернĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксен ушкăнĕ тăшманăн траншейисене сасартăк кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн çапăçса 20 белофина вĕлернĕ. Пĕр соединенин снайперĕсем пĕр кун хушшинче 60 гитлеровеца вĕлернĕ. Ленинград патне пымалли вырăнсем тĕлĕнче сывлăшри çапăçура пирĕн летчиксем нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Тăшманăн тепĕр самолетне пирĕн зенитнăй артиллери пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен «За власть Советов» ятлă отрячĕ нимĕç гарнизонне сасартăк тапаннă. 20 гитлеровеца вĕлерсен партизансем апат-çимĕçпе тумтир склачĕсене çунтарса янă. Темиçе кун иртсен партизансем çĕрле тепĕр нимĕç гарнизонне тапаннă та 80 салтакпа офицера вĕлернĕ. Тăшманран 5 пулемет, темиçе пин патрон тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Англипе Америка авиацийĕ Германин промышленноçлă центрĕсене час та часах пыра-пыра тапăнни халăха пăшăрхантарать. Вилнĕ тата тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем çумĕнче тупнă çырусенчен çакă курăнать: союзниксен авиацийĕ пырапыра тапăнни тăшмана чылай пысăк сиен кӳрет. Шмитфранц доктор Кельнран Пауль Шмитфранц ефрейтор патне çапла çырать: «Пирĕн хунта кашни кун тенĕ пекех сывлăшран тапăнни çинчен пĕлтереççĕ. Тĕрĕс ĕнтĕ, хула варрине хăшпĕр бомбăсем çеç ӳкеççĕ. Пуринчен ытла пысăк заводсем вырнаçнă хула тулашĕсене тапăнаççĕ». Ганс салтак патне Ингеберг Мюнг Аахенран çапла çырать: «...Летчиксем каллех пире чылай сиен кӳчĕç. Дюссельдорфпа Аахен пысăк сиен курчĕç. Ĕç пурпĕрех хăрушшăн вĕçленессинчен хăтălма çуккине туйса тăратăп». Фриц Радке вахмистр патне Рут Радке çапла çырать: «...Томмисем Эссенра каллех хуçаланнă. Пĕр çак çĕрле кăна та 45 тĕлте вăйлă пушар тухнă. Ку вăл питĕ хăрушă! Сывлăшран тапăннисем кашни уйăхранах вăйланса пыраççĕ... Юлашки вăхăтра англичансем сывлăш минисем параççĕ. Çуртсем шăрпăк коробкисем пек йăвана-йăвана каяççĕ. Çакăнса тăракан çула сиенленĕ, халь унпа çӳремеççĕ».

Обер-ефрейтора Гейнц Курцевца унăн амăшĕ Берлинран çапла çырать: «...Кунта сывлăшран килсе тапăнчĕç. Берлина чылай йывăр лекрĕ. Англичансем кунта нумай ĕç турĕç. Хăрушă». Георг Егор ефрейтор патне Фриц Кюне çапла çырать: «Эпир Берлинра вăрçă мĕн иккенне пĕлтĕмĕр. Килсе тапăннă хыççăн пĕтĕм хулипех пушарсем тухрĕç. Пожарнăйсем пушарсене темиçе кун хушши сӳнтерчĕç».

* * *

Греци патриочĕсем итальянецсемпе нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕве вăйлатаççĕ. Саламио сывăхĕнче Грецири партизансем нимĕçсен карательнăй отрядне тусем хушшине илĕртсе илсе кайнă та ăна унта пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Афины—Пирей чугунçулĕ çинче железнодорожниксем 2 çар поездне пĕрпĕринпе çапăнтарнă. Крушени вăхăтĕнче итальянецсемпе нимĕçсен 400 салтакĕнчен кая мар пĕтнĕ тесе пĕлтереççĕ.

Нимĕç авиацийĕ Щигры районне тапăнма хăтланни

Майăн 16-мĕшĕпе 17-мĕшĕнче нимĕç авиацийĕ икĕ хутчен Щигры районне тапăнма хăтланнă.

Пĕрремĕш хутĕнче çав район çинелле темиçе ушкăна пайланса 60 çити нимĕç самолечĕ кĕрсе кайма хăтланнă. Пирĕн истребительнăй авиаци тата зенитнăй артиллери противник самолечĕсен пысăк пайне сапаласа янă. Тăшманăн хăшпĕр кĕрсе кайнă самолечĕсем бомбăсем пăрахнă, вăл бомбăсем тĕлленĕ вырăнтан аякра ӳкнĕ. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 16 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне тата противникăн 4 самолетне зенитнăй артиллери персе ӳкернĕ. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

Иккĕмĕш хутĕнче — майăн 17-мĕшĕнче — Щигры районĕ çинелле нимĕçсен 8 бомбардировщикĕ кĕрсе кайма хăтланнă. Çав района противникăн пĕр самолетне те яман. Нимĕçсен 8 самолетĕнчен 7 самолетне пирĕн истребительсем персе ӳкернĕ. Пирĕн авиацин çухатусем пулман.

Çапла вара Щигры районне икĕ хутчен тапăнса нимĕçсен авиацийĕ мĕн пурĕ 27 самолет çухатнă. Пирĕн авиацин 2 самолет пĕтнĕ.

Çуллахи спорт сезонĕ уçăлчĕ

Майăн 16-мĕшĕнче Шупашкарти спорт обществисем çуллахи спорт сезонне пуçласа ячĕç.

11 сехет те 30 минутăра Шупашкар хулинчи командăсем пĕр-пĕринпе чупса ăмăртма тытăнчĕç. Ăрçынсен 1.200 метр, хĕрарăмсен 700 метр чупмалла. 1.200 метрлă хушша 12 минута та 58 секундăра чупса тухса, «Динамо» обществин пĕрремĕш команди малти вырăна тухрĕ. Иккĕмĕш, виççĕмĕш вырăнсене те «Динамо» обществин командисем йышăнчĕç. «Буревестник» спорт обществин хĕрарăмсен команди 700 метрлă хушша 11 минута та 58 секундăра чупса тухса пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Иккĕмĕш, виççĕмĕш вырăнсене «Спартак» обществин командисем йышăнчĕç.

Каçхине 6 сехетре «Динамо» обществипе «Сталинец» командисем, «Сталинец» обществин хĕрарăмсен командипе хулари сборнăй командă юлташла тĕл пулса волейболла вылярĕç. «Динамопа» «Сталинец» хушшинчи вăйăра «Сталинец» çĕнтерчĕ. Хĕрарăмсен командисем хушшинчи вăйăра хулари сборнăй команда çĕнтерчĕ.

Юлашкинчен «Сталинец» обществин пĕрремĕшпе иккĕмĕш командисем футболла вылярĕç. Обществăн пĕрремĕш команди çĕнтерчĕ. Вăйă 12—0 шутпа пĕтрĕ.

В. Н.

Вĕренӳ çулне „отлично" пĕтерессишĕн

КАЛИНИНО. Уйкасри пуçламĕш шкулти 4-мĕш класри В. Антонова, А. Александров, О. Данилова, Е. Никитина вĕренекенсем пур предметсемпе те «отлично» та «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пычĕç. Пĕр кун сиктермесĕр шкула çӳрерĕç. Халĕ пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пынă вăхăтра пур предметсемпе те «отлично» паллăсем илессишĕн тăрăшаççĕ. Çав хушăрах вĕренӳре начар ĕлкĕрсе пыракан ачасене хăйсем çумне илсе, уроксем умĕн тата уроксем хыççăн йывăр ыйтусене ăнлантарса параççĕ. Вĕсем юлса пыракансене хăйсемпе танлашма пулăшаççĕ.

Вăрçă ĕçне вĕренеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Анат-Тимĕрчкассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем вăрçă ĕçне тĕплĕнрех вĕренме шкулта военнăй кабинет йĕркеленĕ. Унта вăрçă ĕçне вĕренмелли литература, плакатсем пур. Военнăй кабинет çумĕнче «Тăван çĕршывшăн» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Вĕренекенсем хăйсен вăйĕпе 35 винтовка макечĕ, 50 граната макечĕ, 31 сапернăй кĕреçе макечĕ тунă.

Н. Кириллов.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Вир тухăçлăхне ӳстермелли плана иртерсе тултарнăшăн колхозсенчи звеносене ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1943 çулта вир акса туса илмелли плана ирттерсе тултарнă звеносен колхозникĕсене ĕçшĕн хушса тӳленĕ чухне пĕтĕм колхозри мĕнпур тырпулсен тухăçлăхĕ мĕн чухлине шута илмелле мар, çавăн пекех государствăна тĕштырă парас тата вăрлăх фончĕсем хывас плана пурнăçа кĕртессине кĕтсе тăмасăрах тӳлемелле.

Звеносене вир парса ĕçшĕн хушса тӳленĕ чухне СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1941 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче «Чăваш АССР-че ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстеремĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановленире кăтартнă виçесемпе тӳлемелле, урăхла каласан, çирĕплетсе панă çĕр çинче вир туса илмелли плана ирттерсе тултарнă звенори колхозниксем планран ирттерсе туса илнĕ тĕштырăн тăваттăмĕш пайне натурăпа илеççĕ.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ райсоветсемпе ВКП(б) райкомĕсене вир туса илмелли заданисене колхозсенчи звеносене тĕрĕс палăртса парассине тата вĕсене акмалли çĕр лаптăкĕ çирĕплетсе парассине пурнăçа кĕртме хушнă. Вир туса илмелли плана ирттерсе тултарнăшăн ĕçшĕн хушса тӳлемелли çĕнĕ йĕрке çинчен колхозниксене анлăн ăнлантарса памалла.

Чăваш АССР-ĕнчи районсенче 1943 çулта вир туса илмелли ПЛАН

Районсем	Кашни гектартан вир илмелле (центнерпа)
Улатăр	9,5
Элĕк	8,5
Вăрнар	9,0
Йĕпреç	9,8
Калинино	10,0
Кусламка	8,0
Комсомольски	9,0
Хĕрлĕ Чутай	9,5
Кувакино	8,0
Первомайски	9,5
Пăрачкав	9,5
Советски	9,0
Сĕнтĕр	9,0
Вăрмар	8,5
Çĕрпӳ	9,5
Шупашкар	9,0
Чкаловски	9,2
Шăмăршă	9,0
Шăхасан	8,0
Çĕмĕрле	9,8
Етĕрне	9,5
Елчĕк	8,0
Тăвай	8,0
Чăваш АССР тăрăх	9,0

Май уйăхĕнчи плана ытлашшипех тултарассишĕн

СЕНТЕРВАРРИ. Астакассинчи çунасемпе урапасем тăвакан артельте ĕçлекенсем май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса иккĕмĕш кварталти плана икĕ уйăхра пурнăçлама пулнăччĕ. Çак обязательствăна артель ытлашшипех тултарчĕ. Артель председателĕ Г. Корнилов юлташ производстварi ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Рабочисемпе работницăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Кашни цехрах ăнлантарулла ĕçе тăтăшах туса пыраççĕ.

Артель коллективĕ май уйăхĕнчи производство планне 150 процент пурнăçлама обязательство илнĕччĕ. Паянхи куна ăна 75 процента яхăн пурнăçланă та ĕнтĕ. Кунта учет ĕçне те лайăх йĕркеленĕ. Бухгалтер А. Андреева юлташ хăйĕн ĕçне тимлĕн туса пырать.

Артель 1943 çулта йывăç материалĕсем хатĕрлес плана та ытлашшипех пурнăçланă. Ку ĕçре уйрăмăнах производство заведующийĕ В. Агеев юлташ тăрăшса ĕçлерĕ.

А. Андреев,
Древпромсоюз председателĕ.

Куйбышев облаçĕнче газсем тухакан çĕнĕ вырăн тупнă

Куйбышев облаçĕнче газсем тухакан вырăн тупнă. Вăл вырăна Атăл районĕнче геологин 20 группи шыраса тĕпчениле тупнă. (ТАСС).

Кашни колхозрах оборона гектарĕсем акса хăварса çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетĕр!

Чăваш республикинчи колхозсенче çураки ĕçĕсем майăн 15-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан СВОДКА (процентпа)

Районсем	Çурхи тырăсем акни	Тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем акни	Çĕрулми лартни	Кантăр акни	Пĕр çул ÿсекен курăксем
Элĕк	105,8	104,4	100,3	100,0	87,5
Вăрнар	100,0	107,3	97,2	87,5	82,4
Шупашкар	95,8	[illegible]	81,6	—	115,1
Калинински	95,7	101,9	94,8	97,8	36,2
Сĕнтĕр	94,5	103,3	79,2	11,1	89,2
Красноармейски	94,0	91,9	—	—	92,5
Комсомольски	93,8	103,2	55,0	35,2	37,7
Елчĕк	93,6	98,7	66,4	64,5	61,6
Шăхасан	91,7	97,9	49,8	59,3	82,2
Советски	90,7	104,0	55,5	32,8	57,5
Етĕрне	89,3	87,9	3,8	—	75,0
Çĕрпÿ	89,2	100	50,9	4,3	18
Канаш	88,9	99,2	14,8	10,8	111,3
Сĕнтĕрвăрри	88,4	101,6	49,9	8,7	47,6
Ишлей	87,9	101,5	19,5	—	25,6
Йĕпреç	81,8	100,5	52	91.0	31,7
Куславкка	83,2	95,3	34,9	—	85,7
Хĕрлĕ Чутай	82,9	96,1	55,5	26,2	93,3
Чкаловски	77,7	88,5	31,4	32,2	68,6
Первомайски	76,1	87,7	17,2	40	87,2
Вăрмар	74,2	85,4	77,00	7,2	100,2
Тăвай	72,6	85,6	5,2	3,5	70,3
Улатăр	71,7	82,2	20,7	—	17,0
Октябрьски	71,6	90,9	5,8	2,5	86,4
Çĕмĕрле	70,2	84,2	32	58	67,6
Шăмăршă	65,1	1,3	25	20,8	133,5
Пăрачкав	46,7	52,2	16	—	81,5
Кувакински	38,4	43,3	—	—	50,5
Шупашкар хули	82,6	105,9	59	—	100,0
ЧАССР тăрăх	83,3	91,8	40,8	37 0	75,2
1943 çулти майăн 16-мĕшне пулнă	65,0	77,3	51	—	58,6

Пуша выртакан çĕр пачах пулмасть

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, майăн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Çураки планне ăнăçлăн пурнăçлас, тырăсене нумайрах акса хăварас тĕллевпе тимлĕн тăрăшса ĕçлеççĕ колхозниксем. Малта пыракан колхозсем çурхи тырăсене планпа пăхнă чухлĕ çеç мар, акма юрăхлă мĕнпур çĕр лаптăкне тырă акса хăварма тăрăшаççĕ.

Атнар ялсоветĕнчи Коминтерн ячĕпе тăракан колхоз, кашни утăм çĕре шута илсе, пурин çине те тырă акса хăварчĕ, тырăсене планран ирттерсе нумай акрĕ. Тĕслĕхрен, план тăрăх 40 гектар тулă акмалла пулсан, колхоз халиччен усă курман участоксемпе те усă курса, тулла 45 гектар акрĕ, сĕлле 88 гектар вырăнне 111 гектар, пăрçана 30 гектар вырăнне 38 гектар акрĕ, çĕрулмине 30 гектар вырăнне 38,9 гектар лартрĕ.

Çавăн пекех Чапаев ячĕпе тăракан колхоз та, мĕнпур пек çĕр лаптăкĕпе пурнпе те усă курса, çурхи тырăсене план тăрăх 123 гектар акас вырăнне 210 гектар акрĕ. Çапла, колхоз кăçал çурхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкне çĕнĕрен 87 гектара çити сарчĕ.

Халĕ районри 12 колхоз çураки ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕç. Çĕрулми лартмалли плана район 65 процент пурнăçларĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем майăн 23-мĕшĕ тĕлне çураки ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех тĕплĕн вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.
С. Сергеев.

Комсомольски МТС çураки планне пурнăçларĕ

Майăн 17-мĕшĕ тĕлне 3.983 гектар сухаласа, Комсомольски машинно-тракторнăй станци çураки планне 131 процент пурнăçларĕ, 1.200 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

МТС директорĕ В. АЛЕКСЕЕВ.
Политотдел начальникĕ А. ДОЛГОВ.

Агрегатпа ĕçлени мĕн парĕ

Вăрнар МТС-ĕн хăшпĕр бригадисем çураки ĕçĕсене кăçал агрегатсемпе туса пычĕç. МТС-ăн механикĕсем начартарах ĕçлекен бригадăсенче тăтăшах пулса, трактористсене пысăк пулăшу парса пычĕç. 1-мĕш номерлĕ бригада (бригадирĕ Рябчиков юлташ) çуракин малтанхи кунĕсенче ытти бригадăсенчен юлса пычĕ. Çак бригадăн ĕçне лайăхлатас шутпа кунта механик П. Тойдеряков юлташ пычĕ. Вăл трактористсене тракторсен пĕтĕм вăйне ĕçе хурса ĕçлеме вĕрентрĕ, агрегатсем организацилерĕ.

Бригадăра «СТЗ» маркăллă тракторсем. Вĕсен вăйне тĕрĕс шута илсе, Тойдеряков юлташ тракторсенчен плугсемсĕр пуçне тата 2 сÿре, 11 ретлĕ пĕр сеялка кăкарса ĕçлеме сĕнчĕ. Трактористсем вара агрегатпа ĕçлеме пуçларĕç, пĕр вăхăтрах сухаласа, сÿресе тата акса пычĕç. Кивьял колхозĕн уйхирĕнче Евгения Парамонова юлташ агрегатпа ĕçлесе кашни сменăрах 9,77 гектар сухаласа, акса пычĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл 32 гектар сĕлĕ акрĕ. Ытти тракторсем те агрегатсемпе ĕçлерĕç, çапла вара бригада хăйĕн ĕç тухăçлăхне нумай ÿстерчĕ малти вырăна тухрĕ.

Çак паха пуçару ытти бригадăсене те хăвăрт куçрĕ. Тракторсен вăйĕпе вĕçне çити усă курасси тĕп вырăн йышăнчĕ. Çакăншăн трактористсем вирлĕн кĕрешрĕç. Агрегатсемпе ĕçленĕ бригадăсем хăйсен ĕç планĕсене ăнăçлăн тата кĕске срокра вĕçлерĕç. Тĕслĕхрен, 7-мĕш номерлĕ бригадăн тăватă тракторпа 350 гектар сухаламалла пулсан, паянхи куна вăл 372 гектар сухаларĕ, пĕр пин килограмм горючи перекетлерĕ.

«СТЗ» тракторпа агрегатлăн ĕçлесе, М. Козлова трактористка çуракинче 69 гектар сухаларĕ, нормăпа çунтарма пăхнă горючин 4 процентне перекетлесе хăварчĕ. Халĕ тракторсем ирхи çĕртме тăваççĕ.

С. Шадин.
(Хамăр корр.).

Кая юлма сăлтав çук

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Майăн 18-мĕшĕ тĕлне çурхи тырăсене 14.690 гектар акса, район çураки планне 93,8 процент пурнăçларĕ. 64 колхоз тĕштырăсене акса пĕтерне, 26 колхоз çĕрулми лартса тата техникăллă культурăсем те акса, çураки ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçленĕ. Пур колхозсем те пекех çураки планĕнчен ирттерсе оборона гектарĕсем акаççĕ. Паянхи куна оборона фончĕ валли планран ирттерсе 203 гектар тырă акнă.

Анчах районра виçĕ колхоз çураки ĕçĕсемпе питех те кая юлнă. Антавăшри Ленин ячĕпе тăракан колхозăн çурхи тырăсем акмалли тата 109 гектар пур, Высоковкăри Буденный ячĕпе тăракан колхозăн 40 гектар, «Березовка» колхозăн 160 гектар юлнă. Тĕштырăсем акмалли вăхăт иртсе пырать, анчах ку колхозсенче çураки ĕçĕсемпе васкамаççĕ. Колхоз председателĕпе бригадирсем çуракине туса ирттерме халăха çителĕклĕ явăçтарман, ĕçĕн тухăçлăхĕ начар.

Çĕрулми лартас ĕç те нумай колхозсенче кирлĕ пек пулса пымасть-ха. Паянхи куна пурĕ те 980 гектар çеç лартнă.

Çĕрулмине хăвăртрах лартса пĕтерер

Красноармейски районри колхозсен кăçал çĕрулмине чылай нумайрах лартса хăвармалла. Партипе правительство панă задание ăнăçлăн пурнăçласа пырса, халĕ районра 35 колхоз çĕрулми лартса пĕтерчĕç. Чылай колхозсем çĕрулмине планран ирттерсе лартса хăварчĕç. «Букспр», «Комбайн», «Янмурзино» колхозсем çĕрулми лартмалли плана майăн 15-мĕшĕнчех вĕçлерĕç.

Анчах, калас пулать, хăшпĕр колхозсенче çĕрулмине вăхăтра лартса хăварма тăрăшмаççĕ. Малта пыракан колхозсем çĕрулми лартса пĕтерне, Байсубино, Ытмар, Тосай, Красноармейски ялсовечĕсенчи колхозсем халĕ те çĕрулми лартма пуçламан-ха. Тосай ялсоветĕнчи «Четай» колхоз лартма çителĕклĕ вăрлăх хатĕрлемен.

Çĕрулмине те, тырăсем пекех, вăхăтра лартса хăвармалла.

Н. Алексеев.

Государствăна 1944 çулшăн аш-какай параççĕ

ЭЛĔК. Хирлеппуçĕнчи «Красный Октябрь» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ, фронта пулăшассине кунран-кун вăйлатса пыраççĕ. Колхоз кăçалхи çулшăн аш-какай парса татса, 1944 çулшăн 1.050 килограмм пачĕ, кунсăр пуçне кăçал Хĕрлĕ Çар фондне 710 килограмм аш-какай панă. Г. Кустиков, В. Семенов, П. Касмаков колхозниксем государствăна çăмарта, аш-какай памалли обязательствăсене срокчен пурнăçларĕç.

М. Кустиков.

Колхозлă ял çулпуçа ответлет

Пăлакассинчи «Канаш» колхоза эпир ВКП(б) Чкаловски райкомĕн секретарĕпе — Валеев юлташпа çитрĕмĕр. Кăнтăр тĕлĕ. Колхозниксем лашасене кантараççĕ.

Валеев юлташ çулпуç приказĕ çинчен сăмах пуçласа ярать.

Колхоз председателĕ фронтовик гвардеец Георгий Григорьевич Козлов сăмах илет.

— Сталинăн приказĕ — Тăван çĕршывăн приказĕ. Çулпуç фронта татах вăйлăрах пулăшса тăма чĕнет, — тет Козлов юлташ. — Çĕнтерÿ хăвăртрах пултăр тесен, Хĕрлĕ Çарпа çĕршыв валли пирĕн кăçал вăйлă тырпул туса илес пулать. Кĕрхи тырăсем тикĕс шăтса тухрĕç, вăйлă тырпул пухса кĕме шанчăк параççĕ. Ытти — йăлтах хамăртан килет. Çулпуçăн приказне ответлесе, эпĕ мĕнпур колхозниксен ячĕпе Сталин юлташа тата хамăр фронтри туссене çапла шантарса калас шăн: Уйхирте тата фермăсенче эпир те фронтри пекех ĕçлĕпĕр.

«Канаш» колхоз майăн 6-мĕшĕ тĕлнех çуртырисене акас ĕçе вĕçленĕ, планран ирттерсе 10 гектар тырă акнă. Приказпа хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем оборона фондне хывма татах 10 гектар тырă акма, 2 сысна, 2 сурăх çитĕнтерсе мăнтăрлатма кăмăл турĕç.

Фермăсен заведующийĕ Петр Ильич Уруков фермăсен ĕçне лайăхлатассишĕн вăйлăрах ĕçлеме сăмах пачĕ. 1943 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планĕ тăрăх колхозăн 150 сурăх, 180 пуç сысна пулмалла. Халĕ 150 сурăх, 227 пуç сысна пур. Колхоз 1943 çулшăн государствăна аш-какай памалли обязательствăна тултарса, çитес çулшăн 8,18 центнер аш-какай панă. Сĕт-çу памалли обязательствăна июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешет.

Колхозлă ял фронт шухăшĕпе пурăнать. Унăн ывăлĕсем те фронтовиксем пек пулма тăрăшаççĕ. Сеяльщик Николай Комаров, 1926 çулта çуралнă çамрăк, 13 ретлĕ сеялкăпа кулленех 10,5 гектар таран акрĕ. Комсомолка Марфа Хитрова ертсе пыракан бригада çуракине 6 кун çурăра вĕçлерĕ. Пурĕ 54 гектар акнă. Сухалакансем А. Кудрявцев, Сурков, Н. Хитров юлташсем ĕç нормине тăтăшах 140 процент ытла тултарса пычĕç.

Çуракине ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн колхоз уборкăна хатĕрленме тытăннă. Кĕлте турттарас ĕçре майракаллă шултăра выльăхсемпе анлăн усă курма палăртнă. Халĕ çĕнĕрен 10 вăкăра ĕçе кÿлме вĕрентеççĕ. Колхоз тимĕрçи Василий Кошкин тата молотобоец Александр Комаров хĕрсех уборка машинисене юсаççĕ. Тимĕрçĕ лаççинче ирхен пуçласа каçченех хĕрÿ ĕç вĕрет.

П. Николаев.

ЧКАЛОВСКОЕ («Чăваш Коммуни» корр.).

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 16-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем Çурçĕр Францире Канри тата Морлэри тăшман аэродромĕсене атакăланă. Англи истребителĕсем Дьепп сывăхĕнчи чугунçул объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Ытти истребительсем Франци çыранĕ хĕрринчи чугунçул объекчĕсене атакăланă.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНĂ ТАТА РУРПА РЕЙН ОБЛАÇĔСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС) Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Рурпа Рейн облаçĕсенчи тата Берлинри тĕрлĕ объектсене пырса тапăннă.

АНГЛИЧАНСЕМ ЗЕМБРА УТРАВНЕ ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Англин тинĕс-çар вăйĕсем Бон сăмсахĕнчен хĕвеланăçнерехри Зембра утравне йышăнса илнĕ.

ДЕ ГОЛЛЬ ЭЙЗЕНХАУЭР ПАТНЕ, МОНТГОМЕРИ ТАТА АЛЕКСАНДЕР ПАТНЕ САЛАМЛАСА ЯНĂ ТЕЛЕГРАММĂСЕМ

ЛОНДОН, майăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен войскисем Тунисра тунă çĕнтерÿсем пирки де Голль генерал Эйзенхауэр, Александер тата Монтгомери генералсем патне саламлă телеграммăсем янă.

ФРАНЦИРЕ ПАРТИЗАНЛА ЮХĂМ АНЛĂН САРАЛНĂ

СТОКГОЛЬМ, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Францире партизанла юхăм анлăн сарăлса кайни Лаваль влаçĕсене тата нимĕç оккупанчĕсене питĕ шиклентерет. Нимĕçсем контроль лесе тăракан «Генгуар» хаçат нумаях пулмасть статья пичетлесе кăларнă. Вăл статьяра каланă тăрăх, партизанла юхăм çĕршывăн пур департаменчĕсене те (облаçĕсене) çавăрса илнĕ. Партизансен шултăра отрячĕсем армири пек йĕркеленнĕ, тесе çырать хаçат. Вĕсем батальонсене, ротăсене, взводсене тата отделенисене уйăрăлса тăраççĕ. Кашни отделенире 7-шер çын, вĕсен пуçĕнче командир тăрать, унăн икĕ помощник пур.

Франциренпĕлтернĕ тăрăх, Франци партизанĕсем 180 паровозран кая мар тата çар хатĕрĕсем, Германи войскисем, апат-çимĕç тиенĕ 1.200 вагонтан кая мар пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, çĕршер пушă вагонсене пĕтерсе тăкнă. Подрывниксен ятарласа уйăрнă групписем чугунçулсем çинче диверсиллĕ 200 ĕç тунă, çапла вара нимĕçсен темиçе вуншар çар эшелонĕсене ÿпĕнтерсе янă тата виçĕ кĕпере сирпĕнтернĕ.

Греци халăхĕ оккупантсем умĕнче пуç таймасть

АФИНАРА, ЛАРИССАРА ТАТА ПАТРАСРА ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇ ТУНĂ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ

СТАМБУЛ, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм Греци тăрăх халăха ирĕке кăларас юхăм сарăлса пырать. Грецин нимĕçсем лартнă çак «правительстви», Ралисс пуçпулса тăракан пуканелле «правительство», халăхпа оккупантсене улталаса килĕштерме хăтланни пĕтĕмпех путланса ларнă.

Ралисс партизансене нимĕçсемпе кĕрешме пăрахма чĕннĕ, кам та кам хĕçпăшала пăрахать, вĕсене амнисти паратпăр, тенĕ. Халăх оккупантсене хирĕç кĕрешме пăрахас пулсан, [illegible] апат-çимĕç ыйтăвне лайăхлатма сăмах панă. Анчах Ралиссăн çав маневрĕсен пĕртен-пĕр результачĕ çĕршывра партизанла юхăм ÿссе кайни пулнă. Сăмахран, нумаях пулмасть Ларисcăра, Афинăра тата Патрасра Германие хирĕçле нумай йышлă демонстрацисем пулса иртнĕ. Афинăри демонстрацие хутшăннисенчен 300 çынна оккупаци влаçĕсем арестленĕ. Çавăн пекех оккупантсем ялсенчи 100 ытла священнике тĕрмесене хупнă, мĕншĕн тесен мункунта чиркÿсенче «çĕршыва аркатса тăкнă тăшмана» ылханса тата кĕрешме чĕнсе проповедьсем каланă пулнă.

СТАМПАЛИ УТРАВĔ ÇИНЧИ ГРЕК ХАЛĂХĔ ИТАЛЬЯНЕЦСЕНЕ ХИРĔÇ ВОССТАНИ ТУНĂ

СТАМБУЛ, майăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Турцири «Ени Сабах» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Додеканез утравĕсенчи (Эгей тинĕсĕ) Итали влаçĕсем грексемпе туроксене массăллăн хăваласа кăлараççĕ. Хăваласа кăларакансене концентраци лагерĕсене яраççĕ. Утрав çинчи халăх апат-çимĕç енчен питĕ аптăрать. Итальянецсен тискер ĕçĕсемпе тарăхса çитнĕ халăх итальянецсене хирĕç восстани пуçласа янă. Халăх Итали чаçĕсене хĕçпăшалсăрлатнă та Итали офицерĕсене арестленĕ. Офицерсенчен пĕрне, хăйĕн тискерлĕхĕпе çав тери палăрнăскере вĕлернĕ. Утрав çинчи ангарсемпе боеприпассен склачĕсене пурне те сирпĕнтернĕ. Восстани тăвакансем влаçа хăйсен аллине илнĕ. Çакăн хыççăн Германи авиацийĕ утрав çине бомбăсем пырса пăрахнă.

ХРОНИКА

▲ СССР Верховный Совет Президиумĕ Константин Александрович Уманский юлташа СССР-ăн Мексикăри чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ туса хунă. Ăна малтан чрезвычайнăй тата полномочнăй посол ятне панинех хăварнă.

▲ СССР Верховный Совет Президиумĕ В. А. Федюшин юлташа, вăл чирлĕ пирки хăй ыйтнă тăрăх, СССР-ăн Мексикăри чрезвычайнăй тата полномочнăй посланник обязанноçĕсенчен хăтарнă.

Ыран шкулсенче пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пуçланаççĕ

Республикăри çутĕç органĕсем, учительсемпе вĕренекенсем, шкулсенчи комсомолпа пионер организацийĕсем 1942—1943-мĕш вĕренÿ çулне лайăх результатсемпе вĕçлессишĕн çине тăрса кĕрешрĕç. Республикăри шкулсем вĕренÿ çулĕн малтанхи çурçулне пĕлтĕрхинчен пахарах результатпа вĕçленĕ. Вĕренÿре ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 83,6 процент шутланать.

Ыран, майăн 20-мĕшĕнче, шкулсенче пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пуçланаççĕ. Учительсемпе вĕренекенсем, директорсемпе вĕренÿ пайĕн заведующийĕсем, çутĕç органĕсен работникĕсем пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерме тимлĕн хатĕрленчĕç. Пĕлÿ тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнче вĕренекенсен пĕлĕвĕсене çеç мар, учительсемпе çутĕç органĕсене ертсе пыракансен ĕçне те тĕрĕслеççĕ.

Шкулсем, пирĕн пĕтĕм тăван çĕршыв пекех, вăрçă вăхăчĕн йывăрлăхĕсене чăтăмлăн тÿссе ирттереççĕ. Çак вăхăтра шкулсем тĕрекленчĕç, учительсемпе вĕренекенсен коллективĕсем вĕренÿпе ĕçре пиçĕхрĕç. Вĕсем халĕ совет халăхне хăйсен пĕлĕвĕпе пултарулăхне кăтартса пама хатĕр тăраççĕ.

Республикăри шкулсем, пĕтĕмĕшпе илсен, вĕренÿ программине пур предметсемпе те пурнăçланă. Халĕ вĕреннĕ материала тепĕр хут аса илсе тухнă. Вĕренекенсем ăнланайман темăсем тăрăх консультацисем туса ирттернĕ.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсене йĕркеллĕ те организованно ирттермелле. Шкул директорĕсемпе вĕренÿ пайĕн заведующийĕсен, учительсен, класс руководителĕсен пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерес ĕçре питех те тимлĕ пулмалла, районĕç пайĕсен заведующийĕсемпе инспекторĕсен шкулсем пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерме мĕнле хатĕрленнине тата пĕлÿ тĕрĕслевĕсене мĕнле ирттернине тĕплĕн пĕлсе тăмалла. Шкулра е класра пулакан пĕчĕк йĕркесĕрлĕх те тĕрĕслевсене ирттерес ĕçе чăрмав кÿрет, вĕренекенсен пĕлĕвĕсене тивĕçлипе тĕрĕслеме чăрмантарать. Вăхăтра тата педагогика енчен тĕплĕн шутласа тунă расписани, пÿлĕмсене тĕрĕслÿсем ирттерме майлаштарса хатĕрлени, билетсене тĕрĕс хатĕрлени, ассистентсене тĕрĕс вырнаçтарса тухни, пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерме кирлĕ мĕнпур япаласене (ручкăсем, чернил хут т. ыт. те) хатĕрлени,— çаксем йăлтах пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ăнăçлăн ирттерме лайăх майсем туса параççĕ.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнче кăçал райçутĕç пайĕсенчи шкул инспекторĕсен, райçутĕç пайĕсен заведующийĕсен, шкул директорĕсемпе вĕренÿ пайĕн заведующийĕсен ĕçри ответлăха уйрăмах ÿстермелле. Мĕншĕн тесен вĕсенчен чылайĕшĕ хăйсем те ку ĕçре пуçламĕш çул ĕçлеççĕ, çавăнпа вĕсен ватă учительсен канашне итлес пулать. Пĕлÿ тĕрĕслевĕсем ирттерес ĕçре иртнĕ çулсенчи опытпа анлăн усă курмалла. Тепĕр енчен, пĕлÿ тĕрĕслевĕсене кăçал кăна ĕçлеме пуçланă çамрăк учительсем хутшăнаççĕ. Вĕсем, паллах, опытсăр, вĕсене методика енчен пулăшмалла.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсене хатĕрленсе ирттерес ĕçе чылай райçутĕç пайĕсен заведующийĕсем государствăн питех те кирлĕ мероприятийĕ вырăнне шутлаççĕ. Кувакино районĕнче, сăмахран, шкулсем пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерме мĕнле хатĕрленнине тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă. Унта майăн 10-мĕшĕ тĕлне пĕлÿ тĕрĕслевĕсем ирттермелли билетсене хатĕрлесе çитернĕ, вĕсене директорсем çирĕплетнĕ. Комсомольски райçутĕç пайĕ те (заведующийĕ Коновалова юлташ) пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлет. Унта кашни шкулра ĕçсем мĕнле пулса пынине пĕлеççĕ. Инспекторсем хăйсене çирĕплетсе панă шкулсене йĕркеллĕн тĕрĕслесе тăраççĕ.

Шкулсем пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерме епле хатĕрленнине Çĕрпÿ райçутĕç пайĕ (заведующийĕ Лысенин юлташ) тата Вăрмар райçутĕç пайĕ (заведующийĕ Павлов юлташ) начар мар тĕрĕслерĕç. Çĕрпÿ районĕнче 49 шкулран 39-шне тĕрĕслесе тухнă.

Шкулсене çакăн пек ертсе пыни райçутĕç пайĕсен заведующийĕсене пĕлÿ тĕрĕслевĕсем вăхăтĕнче шкул инспекторĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухма, çамрăк учительсене, директорсемпе вĕренÿ пайĕн заведующийĕсене пулăшма майсем туса пачĕ.

Анчах çитĕнÿсемпе пĕрле çитменлĕхсем те пур-ха. Хăшпĕр шкулсем тĕп предметсем тăрăх вĕренÿ программине пурнăçа кĕртеймен. Шăхасан районĕнчи Мăн Яваш вăтам шкулĕ, сăмахран, геометрипе программăна пурнăçлайман. Райçутĕç пайĕн заведующийĕ Христофоров кун çинчен темиçе кун маларах пĕлнĕ, унăн çавăн чухнех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла пулнă. Элĕк районĕнчи чылай шкулсенче те çакнашкалах. Анчах Элĕк райçутĕç пайĕн заведующийĕ Петрикова юлташ, çак çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлес вырăнне, ответлăха хăй çинчен сирме тăрăшать.

Çĕрпÿ районĕнчи хăшпĕр шкулсем, сăмахран Йĕкĕрварти вăтам шкул, пĕлÿ тĕрĕслевĕсене начар хатĕрленнĕ. Ăна ертсе пыракансем хăйсене хăйсем ытла та лăпкăн тытаççĕ. Диктантсен текстне çирĕплетесси, учительсемпе, уйрăм вĕренекенсемпе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсемпе ĕçлесси пачах çителĕксĕр пулса пынă.

Çар предмечĕпе пĕлÿ тĕрĕслевĕсем туса ирттерессипе çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Ку вăл —программăна кăçал анчах кĕнĕ çĕнĕ предмет. Военруксем пулса та çĕнĕ çынсем ĕçлеççĕ. Çавăнпа шкул директорĕсемпе вĕренÿ пайĕн заведующийĕсен, опытлă учительсен военруксене пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттерме вăйлăн пулăшса тăмалла.

Пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттернĕ чухне çакна асра тытмалла: вĕренекенсен пĕлĕвне хакласси çине тимлĕн пăхас пулать. Çăмăллатса ыйтма е отметкăсем ÿстерсе пама юрамасть. Хăйсен класне е шкулне мала кăларас шутпа общественноçа улталама пăхакансене хирĕç çирĕппĕн кĕрешмелле.

Çуркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевĕсене ирттернипе пĕр вăхăтрах ытти ĕçсене те манма юрамасть. Çитес вĕренÿ çулне хатĕрленме халех тытăнас пулать тата вĕренекенсене ялхуçалăх ĕçĕсенче усă курма хатĕрлесе çитермелле. Çак ыйтусене ăнăçлăн татса панинчен çĕнĕ вĕренÿ çулĕн ăнăçлăхĕ килет.

Шкул участокĕсен усси çинчен агитацилеме кирлĕ мар. Вĕсем ачасене практикăллă хăнăху парас тĕлĕшпе те, шкулта апат-çимĕç базине тăвас тĕлĕшпе те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Республикăри шкулсен кăçал 2000 гектар ытла çĕр ĕçлес пулать. Анчах чылай çĕрте ку ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ-ха. Кувакино районĕнче майăн 14-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе те 20 гектар, Советски районра—30 гектар çеç акса хăварнă. Ытти районсенче те ĕç чаплах мар.

Шкул валли вутă хатĕрлес ĕç уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кăçал вутă пулман пирки вĕренме чарăнса ларнă шкулсем те пулкаларĕç. Комсомольски районра ик-виçĕ шкул 2—3 кун хушши вĕренмен. Куславкка районĕнчи пĕр шкул 15 кун хушши хупăнса тăнă. Çаксене шута илсе, кăçал пирĕн асăннă çитменлĕхе урăх тумалла мар.

Малта пыракан шкулсем çитес вĕренÿ çулĕ валли вутă хатĕрлеççĕ. Вăрмар районĕнчи Шăхаль вăтам шкулĕ 200 кубометр вутă хатĕрленĕ, çавăн пекех Комсомольски районри Кинельри тулли мар вăтам шкул (директорĕ Миронова) 70 кубометр вутă хатĕрленĕ. Элĕк районĕнчи шкулсем валли 206 кубометр вутă хатĕрленĕ, 345 кубометр турттарнă. Калинино районĕнче 535 кубометр хатĕрленĕ, 345 кубометр турттарнă.

Анчах шкул валли вутă хатĕрлес ĕç чылай çĕрте пачах çителĕксĕр пулса пырать. Ку ĕçе халех хăвăртлатмалла.

Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕç Вăрмар районĕнче лайăхрах пулса пырать. Райçутĕç пайĕн заведующийĕ Павлов юлташ хатĕрленÿ ĕçĕсене июлĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр туса çитерме палăртнă. Республикăри пур шкулсен те июлĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр çитес вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитес пулать.

Шкул ачисене ялхуçалăх ĕçĕсене хутшăнтарасси—ответлă та кирлĕ ĕç. Пирĕн ку тĕлĕшпе иртнĕ çулхи опыт паха пулчĕ. Вĕренекенсемпе учительсем хирте ĕçлесе кăна 2 миллион ытла ĕçкунĕ тунă. Кувакино районĕнчи Турдаковăри тулли мар вăтам шкул (директорĕ Тихонова) РСФСР Наркомпросĕпе СССР Наркомземĕн иккĕмĕш премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Унти 105 вĕренекен 11.880 ĕçкунĕ тунă. Республикăри вуншар учительсемпе вĕренекенсем ялхуçалăх ĕçĕсене активлăн хутшăннăшăн ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе РСФСР Наркомпросĕн Хисеплĕ грамотисене илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Кувакино районĕнчи шкулсем кăçал РСФСР Наркомпросĕпе СССР Наркомземĕн пĕрремĕш премине илессишĕн вăйлă кĕрешÿ пуçарса ячĕç. Элĕк районĕнче ялхуçалăх ĕçĕсене хутшăнма 72 отряд тунă, вĕсенче 1.474 вĕренекен пĕрлешсе тăрать. Анчах ытти районсенче ку ĕçре çитменлĕхсем чылай-ха.

Учительсемпе çутĕç работникĕсем, вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн çине тăрса кĕрешер!

М. МАКАРОВ,
Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактоpăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1333 Типографи № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф. 6. 52. 12 п.